# «Вăйă выляр-и савăнса?»

(Г.Н.Волков хайлавĕсем тăрăх 7-мĕш класс ачисем валли хатĕрленĕ вăйă)

**Вăйă тĕллевĕсем:**

- Г.Н.Волковăн  хайлавĕсене аса илсе çирĕплетни;
- Тăван çĕр-шыва, унăн паллă çыннисене хисеплеме, вĕсемпе мăнаçланма, тăван чĕлхене юратса вĕренме хавхалантарни;
- ачасен ăс-хакăлне, тимлĕхне, тавра курăмне, пĕтĕмлетӳ тăвас ăсталăхне аталантарма пулăшни;
- вулани, илтни пирки çыхăнуллă каласа пама хăнăхни;
- уроксенче, класс тулашĕнчи мероприятисенче илнĕ пĕлӳпе вăйăра усă курма пултарни.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:**  вăйă валли хатĕрленĕ  презентаци,  Г.Н.Волков сăн ӳкерчĕкĕ, унăн ачасем валли çырнă кĕнекисем, ваттисен сăмахĕсене çырнă плакатсем.

- Аслă çынна пин пуç теççĕ.
- Ятлă çынна ял савать.
- Ырă ят ылтăнран çутă.
- Çынна кура мухтавĕ.
- Этем тени ĕçĕпе паха.
- Лайăх ят мултан та паха.

**Кăтарту  хатĕрĕсем:** компьютер,  мультимеди  проекторĕ.

**Вăйă умĕн пурнăçламалли ĕçсем:** вĕренекенсене Г.Н.Волков пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе паллаштармалла, унăн ачасем валли çырнă хайлавĕсене вуласа тухма сĕнмелле.

**Вăййа хатĕрленни:**  Çиччĕмĕшсене  икĕ ушкăна пайламалла. Ачасем ушкăн ячĕсене тупаççĕ. Вăйăра вĕренекенсен Г.Н.Волков  пултарулăхĕпе çыхăннă ыйтусем çине хуравламалла, вуланă хайлавсене аса илсе çирĕплетмелле.  Конкурс ячĕсене маларах слайд çине çырса хунă, ачасем хăйсене килĕшекеннисене суйласа илеççĕ те ертсе пыракан сĕнекен ĕçсене пурнăçлаççĕ.  Вăйăçăсен хуравне жюри членĕсем хаклаççĕ.



**1-мĕш ертсе пыракан:**

Тĕрĕксен Турри – Шур Кашкăр,
Волков – Кашкăр йăхĕнчен.
Вăл малашлăха курасшăн
Ваттисен пехилĕнче.

Аслă Елчĕкре çуралнă
Çак талантлă хунн ачи,
Пурнăçра çавра çурлаллă
Курнă мар-и Хуначи.

Тăрăшнах чăваш хресченĕ,
Ăс ăсман вăл Пăларан:
Çанă таварса ĕçленĕ,
Тар юхтарнă ачаран.

Утнă ăслăлăх этемĕ
Хĕн пулсан та тăвалла…
Тайма пуçăм, академик,
Тав тăватăп тăванла!

Çамрăксем юман пек кашлăр,
Вĕренсе ваттисенчен…
Тĕрĕксен Турри – Шур Кашкăр,
Волков – кашкăр йăхĕнчен.

(А.Смолин)

**Вĕрентекен:** Ачасем, паянхи вăйă Геннадий Никандрович Волков пултарулăхĕпе çыхăннă. Геннадий Волков (Кашкăр Хуначи) – тĕнчипе паллă ученăй, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, академик, 800 ытла наука ĕçĕн авторĕ, чăваш çĕр-шывĕн чăн-чăн патриочĕ, чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, этнопедагогика шкулĕн тата вĕрентĕвĕн авторĕ. Çавăн пекех вăл пултаруллă çыравçă та. Вăйă вăхăтĕнче шăпах та эсир унăн хайлавĕсене кăмăлласа, тимлесе, ăнланса вуланипе вуламаннине тĕрĕслĕпĕр те.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Ушкăнсем те, жюри членĕсем те хатĕр. Апла пулсан вăййа пуçлама та юрать. Сирĕн слайдра вырнаçтарнă кирек мĕнле ĕçе суйласа илсе ертсе пыракан мĕн хушнине пурнăçламалла пулать. Тимлĕ пулăр, вăйă йĕркине ан пăсăр.

*(Ушкăнсем вăййа кам малтан пуçламаллине палăртас тĕллевпе шăпа яраççĕ, ĕçе пуçăнаççĕ).*

**„Г.Н.Волков сăн ӳкерчĕкĕсем” вăйă**

**1-мĕш ертсе пыракан:** Сирĕн умра Чăваш Енĕн паллă çыннисен сăн ӳкерчĕксем. Хăй вăхăтĕнче вĕсем тăван халăхăмăрăн культурине, чĕлхипе литературине аталантарас тесе чылай тăрăшнă. Çак сăн ӳкерчĕксен хушшинчен сирĕн Г.Н.Волковăн тĕрлĕ çулсенчи сăн ӳкерчĕкĕсене шыраса тупмалла пулать. Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл ĕçлесе илме пултаратăр.



## „Г.Н.Волкова халалласа” сăвăсем

Г.Н.Волкова халалласа чăваш поэчĕсем сахал мар сăвă çырнă. Кăшт канса илмелле итлесе пăхар-ха вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене.

**1-мĕш вĕренекен:**

**Г.Н.Волкова, хамăрăн**
**гениллĕ Кение...**

Эп сана саватăп, шăллăм,
Мухтавна курап инçе.
Ĕмĕрÿ сан пултăр вăрăм
Çак пĕртен-пĕр Çĕр çинче.

Пил-пехил сана, тăванăм,
Çитермешкĕн ĕмĕтне.
Тăшмансем сахал айванăн,
Ăслăн - пĕтмĕ ĕмĕрне.

Ÿстĕрех вĕсен хисепĕ, -
Хăррăн пăх та иртсе кай.
Çавăн пек сĕнетĕп эпĕ -
Тем те курнă Хусанкай.

Аслă чăнлăхшăн тăратпăр -
Халăх чĕрĕлĕхĕшĕн.
Çунакан чуна вăй патăр
Ĕçĕн ĕмĕрлĕхĕшĕн!

**Петĕр Хусанкай**

**2-мĕш вĕренекен:**

**Г.Н.Волкова халалласа**

Эс чечек сĕткеншĕн,
Пылшăн вĕçнĕ хурт пекех
Халăхăн вĕрентĕвне
Пур çĕрте пуçтарнăшăн
Тав тăватăп чĕререн.

Халăхăн вĕрентĕвĕн
Никĕсне хывни питех
Лайăх ĕç. Вăл туслăхшăн,
Лайăх, тăнăç пурнăçшăн
Çивĕч хĕç-пăшал пекех.

Ват çынсен вĕрентĕвне
Эс пуçтарнă тĕнчере, -
Халăхăн пархатарне
Илтĕн ĕмĕр-ĕмĕрех.
Çавăнпа та эп паян
Савăнатăп. Чĕререн
Аллă çул тултарнăран
Саламлатăп Пушкăртран!

**Петĕр Хусанкай**

**3-мĕш вĕренекен:**

**Геннади Волкова**

Хуначи! Илтетĕп сассуна,
Куçăнах куратăп куллуна.
Сан йышши пулсассăн ытларах –
Пурăнатпăр ĕмĕр, чăн-чăнах!

Ак хайхи çăка, кĕрхи çăка.
Шаларах тепре те пурччĕ пуль...
Кĕркуннем! Илемлĕ эс, паха.
Шурă хĕлĕм инçе мар та-ха,

Тăкас мар вăхăтсăрах куççуль
Çут тĕнче кĕрнеклĕ, сарлака,
Ĕлкĕресчĕ астивсе йăлтах,
Астуса тăрасчĕ яланах,

Çутă çур илемлĕ чечекпе,
Тутă кĕр сипетлĕ çимĕçпе.

**Петĕр Хусанкай**

## „Кала та – пĕлсе кала” вăйă

**2-мĕш ертсе пыракан:** Г.Н. Волков – ачасен юратнă çыравçи. Унăн «Асанне калавĕсем», «Юманпа хĕвел», «Кил илемĕ» кĕнекисене вуншар чĕлхепе вулаççĕ. «Кил илемĕ» кĕнеки – ачасен юратнă кĕнекисенчен пĕри. Халĕ Г.Волков хайлавĕсене эсир еплерех ас туса юлнине тĕрĕслĕпĕр. Сирĕн вуласа панă сыпăксем хăш хайлавран пулнине тĕрĕс пĕлмелле пулĕ. Пĕр ушкăнĕ хуравлаймасан тепĕр ушкăнĕ тĕрĕс хуравсем парса хушма балсем ĕçлесе илме пултарать. (Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл).

1. - Асатте, мĕнле-ха апла, - тĕлĕннĕ ача, - эпĕ санран пĕчĕккĕ пулсан та вулама кăна мар, çырма та пĕлетĕп, эсĕ вара халĕ те вулама вĕренсе çитеймерĕн, - тенĕ.

   **(«Çамрăкла вĕренни – чул çинче» калав)**

2. - Анчах ку çунашка тинех ярăнма юрăхлă пулас çук ĕнтĕ. Ăна эпир лаççа кĕртсе хурăпăр. Вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли çунашка пулĕ. Аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашка çине лартса хам килсе пăрахăп.

   **(«Ăслă ача»)**

3. – Мучи, мĕн туса ларан урамара çак çил-тăман вăхăтĕнче?
   – Эй, ачам, эсĕ пурнăçа чухласа илейместĕн-ха. Тулти çил-тăвăл мĕн вăл? Пỹртре ав ывăлăмпа кинĕм харкашаççĕ, ниçтан чарма çук: ку чăнласах та хăрушă çил-тăвăл. Яланах асту, ачам: тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах. Кил-йышра харкашу тухсан çуртран тухса тарас килет..

   **(«Çил-тăвăл»)**

4. – Анне мана паян салма яшки пĕçерсе çитерчĕ. Шăп ачалăхри пеккине. Шăрши те çавах. Тĕсĕ те. Анне хăй те улшăнман. Ватăлнă, паллах, анчах малтанхи пекех илемлĕ те ырă чунлă. Яшкине тăм чашăка ярса пачĕ. Хĕррипе танах. Мĕнле упраса хăварнă-ши çав чашăка? Ĕмĕрхискер вĕт. Аттеренех юлнă йывăç кашăка туртса кăларчĕ. Килте тунăскере. Аттен аллисем ылтăнччĕ.

   **(«Анне яшки – чи тутли»)**

5. – Пĕртен- пĕр эмел – çак асамлă йывăçран чĕрсе илнĕ асамлă турпас пулать, - тенĕ карчăк. – Ăна эсĕ упăшку ĕçрен килсенех çăварна хур та шăлусемпе хытă çыртса тăр, тем пулсан та кăларса ан ỹкер. Кăларса ỹкерсен унăн асамлăхĕ самантрах çухалать.

   **(«Асамлă турпас»)**

6. Тăван чĕлхемĕрçĕм ... Асаттесен пилĕ, асеннесен тупи, кукамайсен пехилĕ, кукаçейсен тилмĕрĕвĕ, анне юрри, атте ỹкĕчĕ, аппа такмакĕ, пичче вĕрентĕвĕ, шăллăм тавĕ, йăмăкăн ачашлăхĕ, хурăнташсен, кỹршĕсен ырă кăмăлĕ...

   **(„Тăван чĕлхемĕрçĕм”)**

## «Асамлă япаласем» вăйă

**1-мĕш ертсе пыракан:** Сирĕн умра, ачасем, тĕрлĕрен япала. Çав япаласем Г.Н.Волковăн хăш-хăш хайлавĕнчен пулнине тĕрĕс асăнмалла пулать. (Кашни тĕрĕс хуравшăн – 1 балл).

Кашни ушкăнран пĕрер ача тухса пĕрер япала суйласа илет, вăл мĕнле хайлавра тĕл пулнине калама тăрăшать. Енчен те пĕлеймест пулсан ăна ушкăнĕнчи юлташĕсем пулăшаççĕ.

**Сĕтел çине хурса тухнă япаласем:**

- турпас татки
- пăрçа
- йывăç çунашка
- чул
- хулă
- курăк
- çĕр
- тăм чашăкпа йывăç кашăк

**Хуравсем:**

- турпас татки („Асамлă турпас”)
- пăрçа („Аçу-аннӳ яланах хисепре пултăр”)
- йывăç çунашка („Ăслă ача”)
- чул („Çамрăкла вĕренни – чул çинче”)
- хулă („Хурама хулли”)
- курăк („Тĕлĕнтермĕш курăк”)
- çĕр („Ылтăн çĕр”)
- тăм чашăкпа йывăç кашăк („Анне яшки – чи тутли”)

## „Хĕвел” кластер” вăйă

**2-мĕш ертсе пыракан:** Г.Н.Волков хăйĕн „Тăван чĕлхемĕрçĕм” калавĕнче тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ пирки тĕлĕнмелле пысăк хавхаланупа çырнă. Калавĕнчи кашни йĕркерех „тăван чĕлхе” тени тĕл пулать. Чĕлхе тата мĕнле пулма пултарать-ши, унпа çыхăннă мĕнле паллă ячĕсене эсир пĕлетĕр? Халĕ икĕ ушкăнĕн те пĕр вăхăтрах салатса панă карточкăсем çинчи хĕвел пайăркисем тĕлне **чĕлхе** сăмаха ăнлантаракан паллă ячĕсем çырмалла пулĕ. Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл ĕçлесе илме пултаратăр.




## «Ваттисен сăмахĕсем» вăйă

**1-мĕш ертсе пыракан:** Пирĕн тăван чĕлхе ваттисен сăмахĕсемпе пуян. Г.Н. Волков юмахĕ-калавĕсенче те чылай вĕсем. Пултарулла çыравçăн кашни хайлавĕ умĕнче эпиграф пуррине асăрханă пулĕ. Мĕнлерех ваттисен сăмахĕсемпе усă курнă-ха этнопедагог? Сирĕн тимлĕхĕре тĕрĕслесе пăхас тĕллевпе «Ваттисен сăмахĕсем» ятлă конкурс ирттерĕпĕр. Сирĕн ваттисен сăмахĕсенче сиксе юлнă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтармалла. (Икĕ ушкăнĕ те карточкăпа ĕçлет. Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл).

1. Пĕрлĕхре ... **(вăй)**
2. Чĕлхепе Атăла та **... (пĕвелеме пулать).**
3. Тăван çĕртен хакли ... **(нимĕн те çук).**
4. Ăса мул тумасть **... (мула ăс тăвать).**
5. Ача ырра курсан ырă пулать. усала курсан ... (**усал пулать).**
6. Кил-çуртра кашăк-чашăк ... **(шăнкăртатмасăр пулмасть).**
7. Сивĕ яшка сивĕтмест, ... **(сивĕ сăмах сивĕтет).**
8. Аллупа ĕçле ...**(пуçупа шухăшла).**
9. Ват çерçие хывăхпа ... **(улталаймăн).**
10. Ашшĕ-амăшне йĕртекен ... **(пархатар курман)**

## «Ӳкерчĕксем» вăйă

**2-мĕш ертсе пыракан:** Ачасем, сирĕн умра Г.Н.Волковăн „Кил илемĕ” кĕнекинчи ӳкерчĕксем. Çак ӳкерчĕксем хăш хайлавра пулса иртекен ĕçсене сăнлаççĕ-ши? Хайлав ячĕсене асăнăр. (Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл).

1-мĕш ӳкерчĕк



2-мĕш ӳкерчĕк



3-мĕш ӳкерчĕк



4--мĕш ӳкерчĕк



5-мĕш ӳкерчĕк



6-мĕш ӳкерчĕк



**Хуравсем:** 1-мӗш ӳкерчӗк – „Ватӑ ҫын – тӑват ҫын”.
2-мӗш ӳкерчӗк – „Суяпа инҫе каяймӑн”.
3-мӗш ӳкерчӗк – „Юлхав сӑлтавне тупать”.
4-мӗш ӳкерчӗк – „Асамлӑ турпас”.
5-мӗш ӳкерчӗк –„Ӑслӑ ача».
6-мӗш ӳкерчӗк – «Ҫил-тӑвӑл».

## «Ҫамрӑкла вӗренни – чул ҫинче» инсценировка

**1-мӗш ертсе пыракан:** Канса илмелле «Ҫамрӑкла вӗренни – чул ҫинче» ятлӑ инсценировка пӑхӑпӑр.

**Автор:** Пӗр ватӑ ҫыннӑн мӑнукӗ шкула ҫӳренӗ. Ҫур ҫул та иртмен, вулама вӗреннӗ те ку. Вара аслашшӗне тӗрлӗ кӗнекесем вула-вула панӑ. Аслашшӗн хӑйӗн те вулама вӗренесси килсе кайнӑ. Мӑнукӗ ӑна кунсерен сас паллисем кӑтартнӑ. Аслашшӗ хӑш-пӗрисене ас тунӑ, чылайӑшне ҫавӑнтах манса кайнӑ. Нумай вӑхӑт иртсен те мӑнукӗ пек яка вулама вӗренсе ҫитеймен.

**Мӑнукӗ:** Асатте, мӗнле-ха капла, эпӗ санран пӗчӗккӗ пулсан та вулама кӑна мар, ҫырма та пӗлетӗп, эсӗ халӗ те вулама вӗренсе ҫитеймерӗн-ха.

**Аслашшӗ**: Эх, ачам, ахальтен мар-ҫке ҫамрӑкла вӗренмесен ватӑлсан вӗренме хӗн тесе каланӑ. Йывӑр ҫав, мӑнукӑм, ват ҫынна вӗренме пит йывӑр, мӗн вӗреннине мансах пыратӑп.

**Мӑнукӗ:** Ҫамрӑкла вӗренни – чул ҫинче, ватӑлла вӗренни- юр ҫинче. Мӗне пӗлтерет ку, асатте?

**Аслашшӗ**: Ача чухне тӑрӑшса вӗренмеллине пӗлтерет: юра ҫил те вӗҫтерет, сар хӗвелӗ те ирӗлтерет, чул ҫӗр ҫул хушши те тӗрӗс-тӗкелех выртать.

**2-мӗш ертсе пыракан:** Ушкӑнсен ӗҫне хаклама вӑхӑт та ҫитрӗ. Жюри членӗсене сӑмах парӑпӑр. (Пӗтӗмлетӳ туни, асӑнмалӑх пӗчӗк парнесем пани).

**1-мӗш ертсе пыракан:** Ҫакӑнпа паянхи вӑйӑ вӗҫленчӗ. Пӗтӗмлетсе ҫакна палӑртмалла: Геннадий Никандрович Волков хайлавӗсенче ҫитӗнекен ӑрӑва ӑс парас, вӗсене тӳрӗ те ырӑ чунлӑ пулма, пуласлӑх ҫинчен питех те тарӑн шухӑшлама вӗрентнине куратпӑр. Ҫавӑн пекех ашшӗ-амӑшне, ватӑсене хисеплесси, пурнӑҫра аслисем вӗрентнине тимлесси, кил-йышпа лайӑх пурӑнасси, тӳрӗ чунлӑ пулма хӑнӑхтарасси, ӗҫе, тӑван халӑха, тӑван чӗлхене юратасси ҫинчен калани малти вырӑнта.

**Вӗрентекен:** Хаклӑ тусӑмсем! Геннадий Никандрович Волков чӑваш ятне, Раҫҫей мӑнаҫлӑхне ҫӳле ҫӗкленӗ. Унӑн ячӗ пирӗн асӑмӑрта ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ.

Тӑван ҫӗрӗн тусанӗ те тӑван, пылчӑкӗ те пылак тенӗ ӑсчахӑмӑр. Кашни ҫыншӑн тӑван ҫӗр-шыв, тӑван ен, тӑван кӗтес, тӑван кил чи хакли. Кашни ҫын хӑйӗн ҫӗр-шывӗпе, тӑван енӗпе, тӑван чӗлхипе мухтантӑр. Нихҫан та тӑван киле, ене ан мантӑр, ӑна упратӑр, унпа мухтантӑр.

Ҫавӑн пекех Геннадий Никандрович пире пурне те атте-анне чӗлхине упрама пилленӗ. Тӑван халӑх ятне кирек ӑҫта та, кирек хӑҫан та ҫӳлте тытма ыйтнӑ. Хамӑр калаҫава унӑн сӑмахӗсемпе вӗҫлес килет: « Пурӑнӑҫ хӑй те самант, анчах та тӗнче тӗлӗнтермӗш ман халӑхӑм пин-пин ҫул пурӑнтӑр! Телейлӗ халӑх! Пехил Сире, тус-юлташӑмсем, ачамӑрсем, мӑнукӑмсем! Манӑн пил, пехилӗм пурсӑра та ҫиттӗр!»

## Усă курнă литература


1. Волков Г.Н. Асанне калавĕсем. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. – 40 с.
2. Волков Г.Н. Кил илемĕ : [калавсем, юмахсем, очерксем: кĕçĕн тата вăтам çулхи шкул ачисем валли] / [И. А. Алексеев, З. И. Чернова ÿнерçисем]. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2007. –127 с.


## Интернет ресурссем


1. http://nasledie.nbchr.ru/personalii/pisateli/volkov/
2. http://www.nbchr.ru/virt11/reading.htm
3. https://infourok.ru/vneklassnoe-meropriyatie-pedagogika-ulăpĕ-gennadij-nikandrovich-volkov-6256531.html